31-345
262

... А ХАЛ
... ЕКЕНСЕН
... ИОТТЕКĔ

ÇĔПРИТУН ШАПЂАК

# ЂУН ИЛЛИСЕМ

ЂĂВАШСЕН
ПАТШАЛĂХ
ИСТАТТĔЛСТВИ

ШУПАШКАР ✱ 1931

Ç. ШĂПЂĂК

# ЂУН ИЛЛИСЕМ

(„КНУТ НАДСМОТРЩИКА“ КИНО-
КАРТТИН ТĂРĂХ ÇЫРНĂ КАЛАВ)

ЂАВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИСТАТТЕЛСТВИ

ШУПАШКАР — 1931 çул

Г. Чебоксары
Типография № 1
Чувашгиза
Уп. Чувашглавлита № 1333
Заказ № 540
Тираж 6.000 экз.

# УМĔНХИ САМАХ

Совет сойусĕ пур тĕлĕшрен те çĕнтерӳллĕн малалла пыни, екикономĕк йенҫен çирĕпленсе, ĕçсĕрлĕхе пĕтерсе пыни; çав вăхăтрах капиталисăм тĕнҫи пĕтĕм криçĕс айне путса пыни, унта ĕçсĕрлĕх кашни кун йышланса, рапоҫҫи клас револуутсиленсе пыни—капиталисăм тĕнҫине никĕсĕпе кисретет.

Вăл мĕн пур айăпа пролеттариатăн пĕртен пĕр ирĕклĕ патшалăхĕ — Совет сойусĕ çине купалама тăрăшат. Вăл ун çинҫен тĕрлĕрен киревсĕр елексем сарат: «Совет патшалăхĕ хăй тыррине йут патшалăхсене йӳнĕ хакпа сутса тăрат», «Совет сойусĕнҫе ирĕксĕр ĕçлеттерессĕ» т. ыт. те.

Çак «Ҫун иллисем» йатлă кĕске калавлă оҫҫĕркра ăçта ирĕксĕр ĕçлеттерни питĕ лайăх палăрат. Вăл «Совет сойусĕнҫе ирĕксĕр ĕçлеттерессĕ» тесе елеклекен патшалăхсенҫен пĕринҫе — Канатăра пулса иртет. Ăна епĕ «Кнут надсмотрщика» йатлă кино-карттинăран илсе кĕскетсе, урăхлатса çырнă.

**Авттăр.**

Шупашкар, 1931 ç.

Сĕм вăрман. Тĕрлĕрен йăвăç. Тĕрлĕрен курăк. Симĕсси. Сарри. Çимĕçли. Уссăрри.

Ƙайăксем. Мăннисем. Ваттисем. Темĕн пек илемлĕ хăшĕпĕрисем. Итлеме те кăмăл вĕсен сассине.

Тискер кайăксем. Хăрушă. Шăмшак çӳçенет вĕсен сассипе. Пĕр пек ĕçлемест ђĕре те хăраса. Пĕрре ђарăнаĭ, тепре—ташлаĭ хăвăрттăн.

Тискер кайăксем хушшинђех пурăнма лекет хăшпĕр ђух çынна та.

Сĕм вăрман варри. Тарăн çырма. Шăнкăртатса йухаĭ тăрă шыв. Çав çырмара, çав çыр хĕрринђе шалаш.

Пиллĕкĕн. Вăйпитти арçынсем. Пиллĕкĕшĕ те маттур. Тимĕр туртса татма пар вĕсене—вĕсем хатĕр. Анђах, тимĕр туртса татма мар, çип те çук вĕсем туртса татмалли. Вĕсем—пуршуаçи савăтĕнђен кăларса ывăтнă рапођђисем. Ƙил çук.

Ӗҫ ҫук. Ҫавӑн пекех ҫимелли ҫӑкӑр ҫук пӗр татӑк. Йе выҫӑ вил ҫавӑнтах выртса. Йе тӑранса пурӑн курӑксем пуҫтарса. Вилӗме хапӑл мар епӗр никам та. Пурӑнасшӑн кӗрешетпӗр тӗнҙере.

Йӑл-йӑл-йӑл курӑнаҫ вут ҫутти шалаш умӗнҙе. Кӑвак тӗтӗме сараҫ сывлӑмлӑ ҫӗр ҫине.

Ҫанталӑк тӑпӑ. Ҫавӑнпа та хӑвмасҫ вӑл тӗтӗме. Мамӑкла саланаҫ тӗтӗм ҫӗр ҫине. Анҙах выртма ҫук ун ҫине. Ҫӗртен майлаштар тӳшекне. Витӗн пӗлӗтпе.

Ҫунакан вут ҫинҙе коҫҫолок. Пӑсланса вӗрет вӗри вутпала. Мӗн пиҫет вара капла пӑслансах? Хуран кукӑлӗ-и, йе ҫамрӑк така? Ҫук. Вӑрманта пуҫтарнӑ тӗрлӗ курӑк. Ҫакӑн пек апатпа пурӑнаҫҫӗ вӑйпитти пилӗк маттур. Урӑх ҫук вӗсен ӗҫсе ҫимелли. Вӑйпитти ҙӗрене тытмалла ҫавӑн пек апатпа.

— Хулана каймалла. Капла вилетпӗр. Хула—хулах. Тен, ӗҫ тупӑпӑр

пăртакçă. Тен, пулăшĕç майĕпен,— шак хуҫĕ йулташĕсене „апат“ хушшинҫе çамрăк та маттур Тшим.

Карĕç вăрăм шухăша: пулаҫ-ши хулара ĕç тупма? Кам та пулин парĕши пулăшу? Йе хула урамĕ хушшинҫех вилме лекĕши?

Тĕрĕс. Йулашки шухăш вăл тĕрĕсрех. Ĕç тупма ан та шухăшла. Пулăшу—ăна ăçтан илмелле? Кам хатĕрленĕ ĕçсĕр ваҫҫи пулăшу? Ун çинҫен шухăшна та ан тыт!

— Епĕ кайатăп!—çине тăрсах тытăнҫĕ Тшим.

— Ăçталла кайас? — иккĕленҫĕç йулташсем.

— Пуйăс ăçталла—кайатпăр çаванталла.

— Лексессĕн?—нийепле че килĕшеймеççĕ пуйăспа кайма.

— Пĕр вилĕм!—пат татрĕ Тшим. Инçех мар выртаҫ тимĕр çул. Вĕçĕмсĕр çӳреççĕ пуйăссем. Анҫах лартмаççĕ пилетсĕр. Укçа çук пилетсем илме. Кăсйасем пушах.

Катаран, уҫланкăран курăнаѝ пăравус. Сылтăма йараѝ вашкăртса тĕтĕмне. Ҫывхарнăҫем ҫывхараѝ патарах

— Мĕн пулаѝ те килет!

— Кайатпăр!

— Кайатпăр!

Мĕн пур вăйа пухрĕҫ. Ђупрĕҫ пуйăс ҫывăхне

— Вутворта кайаѝ. Ку пуйăспа ан кайăр!—хĕрхеннĕ пек пулса ђарђĕ пĕр старик.

Шут тытнă. Кайса пултăр.

— Тен иртĕпĕр ҫăлăнса!—хыпаланса ларђĕҫ маттурсем.

Пушă, таварни вакун. Пĕр стантси. Икĕ стантси. Анăҫуллă ҫул. Тĕрĕслекен ҫук.

Вутворт. Вăйлă стантси. Вăрман ĕҫлеттерекен „Вутворт" камппани те ҫак стантсăрах.

Стантсă. Пуйăс ђарăнђĕ. Тавралла канвуй. Никам ан пăрăн нисталла. Пĕр вакун. Иккĕ... виҫҫĕ... Ух тару пыраѝ ђеретпе.

— Ак купта!

— Стой!

Тытса тухрĕç маттурсене ирĕке. Паҫĕç ĕнсерен. Паҫĕç айакран. Пуçран. Хыçран. Анран йаҫĕç пĕтĕмпех. Кунпах та сахал. Паҫĕç политси аллине. Политси тыткалаŏ хăйĕн аллипе. Хăйĕн реçинккă нухайкка. Хăйĕн пущă. Уншăн шел мар нимĕн те.

„Вутворт" кампани хèпĕртет кун пек ĕçсемшĕн. Çакăн пек ĕçсене кăпа кĕтеççĕ вĕсен ҫунĕсем. Çавăнпа та вĕсем политсипе пĕрле йаланах. Политсийе ĕшкĕртеççĕ. Илĕртеççĕ. Вĕсемпе пĕрлех тире те сĕвеççĕ.

„Вутворт" ҫленĕсемех—сут. Вĕсен аллинҫе çын пурнăçĕ. Каçарма та, кастарма та пултараççĕ вĕсемех.

Каçарасса ан та кĕт нихăçан та. Кастарасса йаланах.

„Тăхăрвунă кунлăха вăрман ĕçлеме йамалла; йе 25 тенкĕ укçан".

Ланках усăнҫĕ Тшим.

* * *

Киппарис вăрманĕ. Лаҫака. Шурлăх. Кӳлленсе тăракан шыв. Пыма ҫук шăрш перет. Тикĕт тĕслĕн курăнаҫ пăхма. Шăршийĕ те тикĕт шăршийех.

Ҫĕлен-калта тĕрлĕрен ҫавăнтах.

Ҫак вырăнта ĕҫлеҫҫĕ „Вутворт" вăрманне. Ҫак вырăнта исленет етем ӳт-пĕвĕ.

Ĕҫ ҫарĕ. Тĕрлĕрен етем. Анҫах никам та килмен кунта ирĕклĕн. Пĕри—тимĕр тăлăпа. Тепри—тимĕр сăнҫăрпа. Ан тар. Вил те—ĕҫле.

Ҫĕркуҫҫи таран тикĕтлĕ шыв. Сăнҫăрпала ĕҫлес пулаҫ ҫав шывра. Йăвăҫ касса йамалла. Татмалла. Туртмалла. Пĕтĕм вăйа хумалла.

Ватă Тшек йăтаймарĕ сăнҫăра. Йăванҫĕ шыв ҫине.

— Тăр, путсĕр!—пăхаканни пырса тапрĕ ҫурăмран.

— Ай!—пушшех те путрĕ пылҫăк ăшнелле Тшек.

— Туртăр!—итлемелле хушрĕ, ыт-

ти ĕçлекенсене пушăпа кăтартса, пăхаканĕ.

Виççĕн çĕклесе кăларҫĕç вата Тшека лаҫакаллă шыв ăшĕнҫен.

— Пăрахăр çĕр çине!—çухăрҫĕ пуçлăх!

Тшека хĕрхенсе йулташĕсем йерипен, хуллен, вăрахăн хуҫĕç çĕр çине.

— Выртăр ретĕн!—Тшекпа йунашар выртгарҫĕ пуçлăх Тшека йатса тухнă йулташĕсене.

Вата, халран кайнă Тшек. Унпала йунашар виçĕ йулташĕ.

— Рас! Рас! Рас!—ҫеретĕн тивертет пуçлăх пушăпа.

Йăвашраххăн тивнĕн туйăнаť пуçлăхшăн. Хăйăр çине пăрахаť пушине. Таптаť ун çине. Çăраť хăйăрпа пĕрле.

Хăйăрлă пушă каллех вăй выҫаť. Ăçтан тивнĕ çавăнтан çурăлаť кĕпе. Кĕпепе пĕрле çурăлаť ўт те. Хĕрлĕ, ҫĕрĕ йун пĕрĕхет çўлелле. Тўс— тўсмелле. Ан ҫĕн. Ан тухтăр сассу!

— Ай! Ан тивĕр!—йулашки вăйне пухса сас паҫĕ Тшек.

— Ан ҫӗн, йӑтӑ!—татах та вӑйлӑрах выҫҫарӗ пуҫлӑхӑн пуши.

Урӑх хусканмарӗ халран кайнӑ Тшек. Пуҫне техуҫҫӗ ҫӗр ҫине. Сӑмах та ҫӗнмерӗ.

Виҫӗ йултапшӗ вӑрахӑн тӑҫӗҫ урисем ҫине. Ҫурӑмсем пӗҫереҫҫӗ. Вӗри йун тумлаӑ куҫҫуҫ йухтарса.

—Ӗҫ патне!—пушӑпах хӑвалаӑ пуҫлӑх кӑсене.

Каллех пилӗк таран тикӗтлӗ, йӑвӑр шыв. Каллех ҫӗклейми ҫӗклем.

Таса ӳте парӑнтараӑ лаҫакари йӑвӑр шыв. Сурана пушшех пӗтерет ҫӗпӗтсе.

Ех, мӗн курмасӑшн суранлӑ вырӑн? Хӑйӑр. Тикӗтлӗ шыв! Вилӗм шӑтӑкӗ ҫаваҫҫӗ ҫаксем етемшӗн.

— Хӑвӑртрах!—ҫӑвӑшт пырса тиверет пуҫлӑх.

— Ан тӑр!—туртаӑ ҫурӑмран.

— Вырт!—вырттараӑ ҫавӑнтах.

Нимайӑпсӑр выҫаӑ пуҫлӑх пуши.

Ҫапла: ир пуҫласа сӗм ҫӗрлеҫҫен иртет ӗҫ кунӗ,

Киревсĕр патака, йăвăр сывлăша, ҫикĕсĕр ĕҫе тӳсеймерĕ ҫамрăк, вăйпитти Тшим те. Тшим сив ҫирпе. Кунĕн-ҫĕрĕн ҫĕтрететет ăна сив ҫир. Айхă ҫук. Апат анмасть. Вăйхал пĕтнĕ пĕтĕмпех. Ĕҫлеме мар, ҫип туртса татма йулман пĕр вăй. Анҫах тума ҫук нимĕн те. Унсăрăн пуҫлăхăн пуши выҫать кашни самантра.

Акă тӳсеймерĕ Тшим. Кукленсе анҫĕ ĕҫленĕ хушăрах. Ҫавăнтах анҫĕ йăванса шыв ҫине. Тшим путать: йулашки вăйхалĕпе тытнă вăл пĕренерен. Ҫăвара шыв кĕрет.

— Айтăр пулăшма!—унăн виҫĕ йулташĕ ҫыххарҫĕҫ васкаса Тшима пулăшма.

— Ăҫта есĕр, йăтăсем?!—хăвалаpĕҫ кайалла пуҫлăхсем.

Ҫын вилнине кура савăнса, пушăсене выҫатса кулаҫҫĕ етемлĕхрен иртнĕ тискер пуҫлăхсем.

— Пĕт!—пушăпа тиверҫĕ, урипе таптарĕ пĕри Тшимăн пĕренерен тытăнса тăракан аллине.

Тшим вĕçерĕнђĕ. Йулашки сывлăшĕпе пакăртаттарат̆ шыва. Тшим путат̆.

Ђăтаймарĕç йулташсем. Сикрĕç ун патне пулăшма. Çурри вилĕ кĕлеткене кăларђĕç шывран. Пĕтнĕпе пĕр.

— Кам ђĕнђĕ сире?!—пушине вылђаттарма тытăнђĕ пуçлăх.

— Тшим пирĕн!—пушă вăйĭине пăхмасăрах çыран хĕррине кăларса хуђĕç Тшима.

— Вилмерĕни, йăтă çури?!—пырса тапрĕ пуçлăх Тшима айакран.

Тшим ђĕнмерĕ. Хусканмарĕ. Выртрĕ вилнĕ пек. Хал йулман. Хал пĕтнĕ пĕтĕмпех.

Лађакаллă, шывлă вырăн тыткалат̆ пурне те хăйĕн аллипе.

Вунсакăр сехет ĕç кунĕ. Апатсăр. Выçă. Çурăмран пушă.

Ниçталла ан пăрăн. Тавралла хурал. Ирхине тухаççĕ хуралпа. Ĕçлеççĕ хуралпа. Ĕçрен кĕреççĕ хуралпах.

Тађви йулђĕ кайарах. Сĕтĕреймест вăл патвар тимĕр сăнђăра. Йуланутлă хурал пырса тиверђĕ пуç урлă. Тађви ўкрĕ çавăнтах.

— Ан йул, каптăрка!—тискеррĕн кăшкăрђĕ йуланут.

Тађви ђĕнмерĕ. Ним тапранми выртаŭ çĕр çинђе.

— Тăмастăнтăк—пĕт! —таптатрĕ йуланут çилленсе.

Тађви хусканмарĕ.

Тщиме çавăтнă икĕ йулташĕ.

Иртмест Тщимăн уринђен ури. Кĕлетки сўсленнĕ пĕтĕмпех.

— Пăлахайа перетĕн, пўтсĕр?!—çитрĕ йуланут.

— На, паттăрлан!—хуђĕ çурăмран пушăпа.

Лăнках усăнђĕ Тщимăн пуçĕ. Ахаљ те утайман урисем ђарăнђĕç. Утаймарĕç.

Вилĕ сынна çĕклесе кĕнĕ пек çĕклесе кĕђĕç йулташĕсем парака.

Тĕттĕм парак. Мĕн пурĕ те пĕр çутă парак варринђе.

Нарсем, сĕтелсем. Пурте ҫавăнтах. Ҫавăнтах апатлан. Ҫавăнтах ҫывăр.

Апатлан. Анҫах мĕнпе апатлан?

Вĕри шыв. Пĕр татăк ҫăкăр. Урăх? Урăх ҫук нимĕн те. Апатлан ҫакăнпа. Савăн. Пух вăйна ĕҫлеме! Паттăрлан!

Ĕҫре пушă. Пушăсăр иртмест апат та. Кашни апатра тивет кама та пулин. Унсăрăн ҫук.

Ҫын сăнĕ пĕтнĕ пĕтĕмпех. Никам пуҫĕ, никам пиҫĕ выҫамасť савăнса. Пурте салхуллă. Пурин те хуйхă ҫĕрере.

Хырăм выҫă. Ҫипуҫ ҫĕтĕк. Ҫурăмра суран. Суранра хăйăр. Ҫийелтен сĕрнĕ тата тикĕтпе.

— Кам кахаллапнăҫҫĕха пайан?— пушине алра выҫатса кĕҫĕ апат ҫинĕ ҫĕре пуҫлăх.

Никам та ним те ҫĕнмерĕҫ. Пурин те тухрĕ ҫурăмра сив тар.

— Кама-ши?

— Манаши?

— Санашп?—пăшăлтатса илҫӗс пусмăрлăхпа пусăрăннă ҫунсем.

Аран уҫрӗ куҫӗсене Тшим. Пуҫне ҫӗклерӗ майӗпен. Сисрӗ пушă ун ҫинҫе выҫасса. Анҫах ҫӳҫенме те пӗлмерӗ. Халран кайнă вăл пӗтӗмпех.

— Ну, найан! Тух кунта!—тискеррӗн ҫӗнҫӗ пушăллă пуҫлăх.

Тăма тытăнҫӗ Тшим. Тăраймарӗ. Ларҫӗ ҫавăнтах.

— Ну?!—хайарланҫӗ пушшех пушă хуҫи.

Ҫавăнтах ӳкрӗ Тшим.

— Йăтăр!—пушăпа „йусарӗ" пуҫлăх икӗ йулташне.

Йăтмарӗҫ. Йавкаланҫӗ вӗсем ҫинҫе те ҫав пушă.

— Йăтăр!

Вăрахăн, хӗрхенсе, хăйусăр ҫавăтса тухрӗҫ Тшима паракваррине.

— Вырт!

Ҫавăнтах туртса антарҫӗ урай варрине. Вилнӗ пек ӳкрӗ Тшим. Вилнӗ пек выртрӗ.

Пушă тытăнҫĕ хăй ĕҫне тума. Ҫурăт кĕпене. Ҫурăт ҫурăма. Пĕрĕхмеллех пĕрĕхет вĕри йун.

Тшим хускалмасть. Вĕри куҫҫуль тумланать хăмасăр, хăйăрлă урайне.

— Тăр, найан!.. А-а-а, тăмастăн! ҫитмен еппин. На, ил тăраниҫҫен!

Хăйăр ҫинҫе таптарĕ пушине. Тытăнҫĕ тепĕр хут.

Пурте ҫĕтреҫҫĕ тискерле ĕҫрен. Пурте хăраҫҫĕ. Ҫӳҫенеҫҫĕ. Хĕрхенсе куҫҫульпе йĕреҫҫĕ. Анҫах ҫăлма ҫук йулташа. Вĕсене хăйсене те кĕтет ҫав пушах, ҫав хушăрах.

— Пуҫтарăр!—тăранҫĕ пушă. Тавралла пăхса илҫĕ тепĕр хут.

Пурин те ҫĕтренҫĕ ҫанҫурăм.

Анрап кайнă Тшима илсе хуҫĕҫ йулташсем нар ҫине. Тшим хусканмарĕ те. Ҫĕри тапнинҫен кăна паллă вăл вилменни.

— Выртăр! Ҫывăрма!

Пурте выртрĕҫ нарсем ҫине, харпăрхăй вырăнне. Урари сăнҫăрсемпе сăнҫăрлларĕҫ пуҫлăхсем нарсенҫен.

Шăпах. Сурансем ыратнипе нăйкăшни кăна илтĕнет паракра.

*
* *

Тшим—амăшĕн пĕртен пĕр ывăл. Ђунтан йуратаť вăл ăна. Ђунтан хĕрхенет. Ђунне пама хатĕр унпăн

„..Тăхăр вунă кун ирĕксĕр вăрман ĕçлемелле; йе 25 тенкĕ укçан тÿлемелле. Çăлма тăрăш, йуратнă анне“.

Пĕрре кăна мар, темиçе вуласа тухрĕ çак çырăва Тшим амăшĕ.

Вĕри куççуљ кăтăклаť ват куça. Еслĕкленсе ђĕтренет ватă кĕлетке.

— Ывăлăм, ывăлăм!—çырува ытакласа макăраť.

Вутворт вăрманĕ—етем мурĕ. Етем масарĕ.

Пурте куç умĕнђех çак тискерлĕхсем. Ывăлĕ асапланнине, ывăлне хĕненине, унтан мăшкăланине, ăна етем вырăнне хуманнине, вăл вилĕм патне çывхарнине питĕ те лайăхах ăнланаť амăшĕ. Çаксем пурте унăн куçĕ умĕнђе.

— Пулӑшас,—сырӑва ҫуп туса вӗри куҫҫуҫне тӑкаҫ амӑшӗ.

Пулӑшас! Пӗр сӑмах. Анҫах мӗнпе пулӑшас? Ӗҫлекен никам та ҫук ҫемйере. Пӗр пӗҫҫеп карҫӑк. Пурнӑҫ ҫӳхе. Хӑй те пурӑнаҫ выҫӑллӑ-тутӑллӑ.

Пулӑшу кӗтеҫҫӗ ывӑлӗнҫен. Пулӑшу пулмарӗ. Килҫӗ ҫӗклемпе хуйхӑ: ывӑлу Вутвортра.

Тӗрлӗрен пӗртаксӑ капӑр хатӗрсем: кӗпе-тумтир, мӑйа-шӑрҫасем. Ҫаксене илсе тухаҫ рынӑка.

— Намӑс мари ку таварсемпе?

— Тула кӑларса пӑрахсан.

— Пӑрах ҫӗре.

— На икӗ тенкӗ!

Ҫак сӑмахсемпе мӑшкӑлаҫҫӗ рынӑкра Тшим амӑшӗнҫен. Ҫур хакпа, ҫӗрӗк хакпа сутаҫ ирӗксӗр. Ҫӑлмаллах вӗт ывӑла ҫӗрӗ тамӑкран. Харпӑр хӑй ҫунӗ. Пӗртен пӗр ывӑл.

Ҫавӑн пек патшалӑхра, ҫавӑн пек ирсӗр самантра пур тетӗни есӗ ҫу-

хăншăн çăлăнăç? Ан та шухăшла ун çинҫен. Шухăшна ан ил!

Куççуҫпе пухнă 25 тенкĕ лекмерĕ Тшим аллине. Вырнаçрĕ вăл пуçлăхăн кăсйине. Тшим алла илме мар, пĕлмест те вăл укçа çинҫен.

—Тшим, ывăлăм!—Тшим минтерне пырса ыталаt амăшĕ Тшим таврăнасса кĕтсе.

— Тшим пайан таврăнмалла,—савăнăçлă калаçаt кÿршĕсем умĕнҫе.

— Тшим килнĕ çĕре,—хыпаланса хатĕрлет, ҫухăн та пулин, тĕрлĕрен апат.

Анҫах Тшим таврăнмарĕ. Таврăнма мар, хыпар та ун çинҫен килмерĕ.

— Тен, сывă мар?—иккĕленме тытăнҫĕ амăшĕ.

— Тен, çухалнă вăл ку тĕнҫерен те?—хуйăха ÿкрĕ пĕтĕмпех.

— Тен, çынсăр тухаймасt?—ҫунтан хĕрхенҫĕ ывăлне.

— Тен, хамăн каймалла?—кайма шут тытрĕ ывăлĕ патне.

— Каллех расхут. Çул укçи,— лăштах кайрĕ ҫĕререн ватă карҫăк.

— Анҫах... каймаллах,—татăклă шут тытрĕ хăйне парăнтарса.

*
* *

„Вутворт“ пуçлăхĕсем. Питĕ те вашават йышăнҫĕç карҫăка. Аслă пуçлăхĕсем—хуçисем—пĕлмеççĕ Тшим мĕнле пурăнишне. Карҫăка хаваслансах акă тавăрма пулҫĕç ывăлне. Тшимăн суранĕсене, Тшим вырăн çинҫе пĕлмесĕр выртнине пĕлнĕ пулсассăн шухăшланă пулĕҫҫĕç урăх шухăпша.

Çĕнĕрен кăна ĕçе кĕнĕ иншенер Риҫарт питĕ хавас пулҫĕ карҫăка. Риҫарт—йаланах ĕçлекенсемпе пĕрле. Йаланах вăл ĕçлекенсем майлă. Пĕрре кăна мар ҫарнă вăл ĕçлекенсене хĕнеме. Пĕрре кăна мар илтнĕ вăл аслă пуçлăхĕнҫен çавăншăн сив сăмах. Анҫах ун вĕри йунĕ йаланах хӳтĕлет рапоҫҫисен йунне.

— Риҫарт, мĕншĕн атте сăмахне

кĕместĕн ўкĕте?—ўкĕтлет хуҫа хĕрĕ Риђарта.

Риђарта питĕ те йуратат̆ хуҫа хĕрĕ. Риђарт та ăна ђунтанах.

— Есĕ ҫамрăк, ăнланмастăн, ђунăм. Епĕ сана йуратататăп пĕтĕм ђĕрепе. Аҫусене нихăҫан та,—патах татрĕ хĕр сăмахне Риђарт.

— Мĕншĕн?—хăранипе аллисене йађĕ хĕр Риђарт майĕнђен.

— Йун ĕҫекенсем сан аҫусем!

— Риђарт!

— Ҫук! Ђунăм!

— Пĕлетĕп!

— Итле аттене.

— Ҫук.

Риђарт та пĕлмен Тшимпа мĕн пулнине. Тшимăн амăшĕ килнĕшĕн хĕпĕртенипе, Тшима ҫăлăнăҫ ситнĕшĕн савăнса, хăйех ђупрĕ вăл Тшим пурăнакан парака.

— Тшима киле йамалла! Тавайăр мана. Хам илсе кайатăп,—пырса йевитлерĕ рапођђисен пуҫлăхĕсене.

Вирелле тăҫĕҫ пуҫлăхсен ҫӳҫĕсем. Пăхса илҫĕҫ пĕр-пĕрне вăрттăн куҫсемпе. Лăштах усăнҫĕҫ пуҫлăхсен пуҫĕсем. Пăхаймарĕҫ Риҫарт ҫинелле.

— Ăҫта Тшим?

— Сывăмар. Ăсатрăмăр ăна урăх парака.

— Суйатăр?!

— Ҫук!

Риҫарт вĕҫтерҫĕ ак урăх парака Тшима шырама.

Тшим пулнă ҫав паракрах. Анҫах вăл выртать пĕлмийех. Суранĕсем шыҫăннă. Куҫĕсем хупăннă. Ҫĕлхи ҫыхăннă. Ҫĕнеймест вăл сăмах.

— Пĕртен пĕр ҫăлăну: Риҫарта пӳлсе кăнтмалла; парака ҫĕртсе йамалла!

—Васкамалла!

— Пĕтетпĕр.

— Хамăра килҫĕ ĕнтĕ вилĕм.

Акă мĕн канашлаҫҫĕ паракри пуҫлăхсем.

Тшим сывлăхĕ ҫинҫен канашлама пынă рапоҫҫи кĕреймерĕ те пуҫлăх-

сем патне. Алăк хăлăпне тытнă çĕр-тех анҫĕ кукленсе. Пуçлăхсен канашлăвĕ çурҫĕ унăн ҫĕрине: „Риҫарта вĕлермелле; парака вут тĕртсе йамалла“. Шуткă-и калама? Мĕн ҫухлĕ халăх паракра. Çурри ытла выртаççĕ вĕсенҫен сăнҫăрта. Сахалах мар пĕлми выртакан суранпа. У-у, хăрушă! Питĕ те хăрушă!

— Тăррр!—çула пӳлҫĕç Риҫарта каварлашнă „пантăсем“.

Туртса антарҫĕç çавăнтах ут çинҫен.

Риҫарт ăнсăр. Йăвăр алăран йăвăр ҫукмар ăнран йаҫĕ Риҫарта.

— Хурас çавăнта.

— Тунката айне.

— Çук.

Риҫарт пăрахăç кив çуртра. Вăрахăн ăн кĕрет. Анҫах ăнланаймасӳ вăл хăй ăçта выртнине.

Алăк умĕнҫе илтĕнеççĕ вăрах сасăсем.

— Сыхлаççĕ,—шута илҫĕ Риҫарт.

Йерипен, вăйхалĕпе тухса шурĕ жив çуртран хыçалтан.

Тăшмансем сисмерĕç.

Ригарт сисрĕ хăйне мĕншĕн леккине. Каймасŏ вăл малалла. Çавăрбĕ кайалла. Мĕн пур вăйпала йараŏ лашине. Çырма та çырма мар; карта та карта мар. Тӳрĕрен тӳрĕ. Вĕçтерет çилĕлле.

Çăра йăм тĕтĕм. Çапçутă вутхĕм. Тăпах бармĕ лашине Ригарт.

— Ех, бун иллисем,—вăрахăн усрĕ пуçне лаши çинелле.

— Ех, кăпитал алли!—тапăрларĕ лашине.

Пуђккăлла вĕçтербĕ тапăрланă ут. Анбах иртнĕ çав вăхăт. Параксем хĕмленеççĕ вутлă хĕмпеле.

Виçшер хут нарсем. Тулли çын. Анбах пурте сăнбăрпа. Вут çулăмĕ çуллаŏ вĕсене вĕри бĕлхипе. Бĕпĕтет, хĕстерет. Тарма çук. Пĕт çавăнтах.

Ирĕкрен халăх пухăннă тавралла. Кĕреççĕ вут çине хĕмпеле тавлашма. Çĕмĕреççĕ, ватаççĕ сăнбăрсене. Ан-

ҫах нумайпи ҫӗмӗрӗн? Нумайпи ҫăлăн вутхӗм ăшӗнҫе?!

Пушар ҫакараӯ хăйӗн хăватне. Никӗссем кăна йулнă параксен. Тискерӗн курăнаҫҫӗ етем шăммисем. Хуйхăллă йухаҫҫӗ вӗри куҫҫуљсем.

— Хăйсене вутта пăрахас!

— Тавайăр!

— Тытăр.

Парак пуҫлăхӗсене йарса илҫӗ халăх. Илсе пыҫӗҫ вутхӗм хӗррине.

— Ҫарăнăр! Самосутпа ҫăлăнăҫ ҫук. Самосут хăтармасӯ нушаран. Ку вутхӗмӗ мар, урăх вутхӗмӗ кирлӗ вӗсене, — хӗрӳллӗхпе лăплавтарҫӗ халăха Риҫарт.—Пулмаллах вăл. Вăл пулӗ.

— Ман Тшим?—йулашкинҫен пырса тăҫӗ Тшим амăшӗ.

— Тшим тухаймарӗ.

— Тшим сунҫӗ!

— Тшим вилҫӗ!

Ҫавăнтах ӳкрӗ ват карҫăк. Ҫавăнтах паҫӗ хăй ҫунне.

* * *

„Совет сойусĕнҫе ирĕксĕр ĕҫлеттереҫҫĕ“ тесе елеклекен патшалăхсенҫен пĕринҫе — Канатăра пулнă ку ĕҫ. Ҫапла ĕҫлеҫҫĕ вăл тĕнҫере. Ҫапла ĕҫеҫҫĕ унта ĕҫхалăх йунне.

Сăхă пуршуаҫи—путсĕр самана!

Хакĕ 10 пус
Цена 10 коп.

С. Толмасов-Шыпчык. ДУШЕГУБЫ. Рассказ

Чувашское Государственное Издательство
Чебоксары 1931 г.